1944
ОКТЯБРЬ
8
ВЫРСАРНИКУН
199 (6694) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Колхозниксемпе колхозницăсен социализмлă ăмăртăвĕ

Октябрьти социализмлă аслă революци 27 çул тултарас кунччен тата пĕр уйăх юлать. Пирĕн совет халăхĕ хăйĕн чаплă уявне ялан пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хăнăхнă. Пĕр уйăх каялла Мускаври Ленин орденĕ Сталин ячĕпе тăракан завод коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каларĕ. Çакăн хыççăн пĕтĕм çĕршывăн промышленность предприятийĕсенче ăмăртăвăн аслă хумĕ сарăлса кайрĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсен ăмăртăвĕн паттăр хумне пуçарса яракансем Саратов облаçĕнчи Воскресенски районĕн Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пулчĕç. Вĕсен патриотла чĕнĕвне халĕ пĕтĕм çĕршывăн колхозникĕсемпе колхозницăсем сӳтсе-яваççĕ, хăйсем çине обязательствăсем илеççĕ.

Районсенчен килекен хыпарсем Саратов облаçĕнчи колхозниксен чĕнĕвне пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем ăшă кăмăлпа кĕтсе илни, ăмăртăва пур колхозсем те хутшăнни çинчен пĕлтереççĕ.

Ишлей районĕнчи кашни колхозрах пухусемпе канашлусем пулса иртеççĕ, колхозниксемпе колхозницăсем, Саратов облаçĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине ырласа, хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илеççĕ, ялхуçалăх ĕçĕсене октябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче пĕтĕмпех вĕçлеме пулаççĕ. Çавăн пек хыпарсем ытти районсенчен те килсех тăраççĕ.

Пирĕн колхозсем умĕнче халĕ пысăк та ответлă ĕçсем тăраççĕ. Тырпула пухса кĕртсе авăн çапса пĕтермелле, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем тата МТС ĕçленĕшĕн натуроплата парса татмалла, кĕрхи çĕртме тумалла, вылăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма çителĕклĕ апат тата ăшă витесем хатĕрлесе çитермелле.

Государствăна обязательствăсем тăрăх тырă, пахча-çимĕç, сӳс-кантăр тата МТС ĕçленĕшĕн натуроплата парса татасси — колхозсен чи хисеплĕ тивĕçĕ. Çак тивĕçе пурнăçлассишĕн пирĕн пур колхозсен те малта пыракан районсенчи колхозсем пек кĕрешмелле. Государствăна тырă парас ĕçре юлса пыракан Чкаловски, Кувакино, Шăмăршă, Пăрачкав, Комсомольски районсенчи колхозсен ăмăртăва хутшăнса обязательствăсем илнĕ чухне государствăна тырă парса татас задачăна чи малтан асра тытмалла. Илнĕ обязательствăна срокра пурнăçлама туртăм вăйĕпе ĕç вăйĕ çителĕклĕ таран уйăрмалла.

Çак кунсенче пирĕн хаçатра республикăра авăн çапас ĕç çителĕксĕр пыни çинчен ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени пичетленсе тухрĕ. Çак постановленире авăн çапас ĕçе мĕнпур колхозниксене явăçтармалла, çак ĕçе тĕрĕс организацилемелле, колхозниксен ĕç дисциплинине çирĕплетмелле тесе уйрăмăнах кăтартса панăччĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе организацилесен, республикăри пур колхозсем те çывăх кунсенчех авăн çапса пĕтерме пултараççĕ тата пĕтермелле те. Первомайски районри нумай колхозсем авăн çапас тĕлĕшпе юлса пыраççĕ. Çав вăхăтрах «Большевик», Буденный ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем авăн çапас ĕçе паян-ыран вĕçлеççĕ. Çак районри «Ударный», «Правда» тата ытти колхозсем вара çуррине те çапман. Сăлтавĕ мĕнре-ха?

«Большевик» колхозра ĕçлеме пултаракансене пурне те ĕçе мобилизациленĕ, вĕсем кăнтăрла та, çĕрле те авăн çапаççĕ. Çав вăхăтрах «Ударный» колхозра çĕрле ĕçлемеççĕ, кăнтăрла та ӳрĕк-сӳрĕк кăна ĕçлеççĕ. Социализмлă ăмăртăвăн чи паха енĕсенчен пĕри вăл — малта пыракансен опытне юлса пыраканнисене хутшăнтарасси пулса тăрать.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвăн обязательствăсенче пĕри — çывăх вăхăтра кĕрхи çĕртме тума пĕтересси пулса тăрать. Кĕрхи çĕртме тăвасси — килес çулхи тырă тухăçлăхне кĕрешни пулать. Ку тĕлĕшпе нумай колхозсем ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ. ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи çĕртме тумалли 400 гектар çĕр планне тултарнă. Çак колхозпа ăмăртакан «Марс» колхоз 430 гектар кĕрхи çĕртме тусса плана ытлашшипех тултарнă. Районри ытти колхозсем вара 40—50 гектар сухаланипе лăпланса лараççĕ. Уяв умĕн ăмăртса çĕнтерес тесе, колхозсем çĕртме тумалли плана çывăх кунсенче тултармалла.

Хĕл çывхарать. Вылăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ апат-хатĕрлес тесе, фермăсене хатĕрлес тесе республикăри колхозсем ĕçлеççĕ. Анчах хăшпĕр колхозсем вылăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленессине пăхмаççĕ. Кусен витисем юсавсăр, ферма çурчĕсене хатĕрлессине хăвăртлатмалла. Кусла(вкка) районĕнчи колхозсен витисене тахçанах юсаса хунă. Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхоз июль уйăхĕнчех витесене юсаса, чӳречесене кантăк лартса, шăтăксене питĕрсе ăшă каймалла мар тунă.

Вылăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене ăшăтса хĕле хатĕрлениччен вылăх ĕрчетмелли плана тултарасси килет. Ахальтен мар ĕнтĕ Саратов облаçĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен обязательствисен шутне вылăх витисене юсаса хĕле хатĕрлессине те кĕртнĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва республикăри трактористсем, комбайнерсем пурте хутшăнмалла, кашни МТС тата тракторист авăн çапмалли тата кĕрхи çĕртме тумалли хăйсен планне ытлашшипех тултарассишĕн большевикла ĕçлемелле.

Уяв умĕнхи ăмăртăвăн ăнăçлăхĕ ăмăртăва мĕнпур колхозсем, бригадăсем, звеносем, фермăра ĕçлекенсем, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем хутшăнса хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илнинче кăна мар. Çав обязательствăсене пурнăçа кĕртессине организацилес пулать. Сăмах патăн пулсан, ăна пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçле. Çакă пулать чи кирли.

Социализмлă ăмăртăвăн тĕп принципĕсенчен пĕри вăл — юлса пыраканнисене малтисем пулăшса пĕтĕмĕшле çĕкленӳ тăвасси пулать. Малта пыракан районсенче те юлса пыракан колхозсем пур, çавăн пекех юлса пыракан районсенче те малта пыракан колхозсем сахал мар. Пирĕн республикăри колхозсемшĕн пĕр-пĕрне социализмлă пулăшу парасси çĕнĕ япала мар. Кăçал тырă вырнă тата кĕлтесене капана хывнă вăхăтра малта пыракан колхозсем кая юлнисене туртăм вăйĕпе ĕç вăйĕ ярса пулăшрĕç. Çак опытпа авăн çапас, государствăна тырă парас тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре те анлăн усă курмалла. ВКП(б) райком секретарĕсемпе райисполком председателĕсен, çакна асра тытса, уяв умĕнхи ăмăртăва оперативнă ертсе пымалла.

Колхозсенчи коммунистсемпе комсомолецсем ăмăртăва пуçарса пыракансем пулмалла, хăйсен ĕçĕнчи паха тĕслĕхсемпе ыттисене çитĕнӳсем тума хавхалантарса пымалла.

Государствăна çĕрулмипе пахча-çимĕç парас ĕçе хăвăртлатмалла

Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем — сивĕпе пăсăлакан тата йĕпе-сапаллă çанталăка юратман культурăсем. Çавăнпа та вĕсене пухса кĕртес тата государствăна леçсе парас ĕç паян-ыран тумалли ĕç пулса тăрать, мĕншĕн тесен кĕрхи çанталăк эпир вăл ĕçе вĕçленипе вĕçлемениине пăхса тămасть, вăхăт çитнĕ май сивĕтет, вăхăт килнĕ май çăмăрсемпе юрсем çума тытăнаççĕ.

Малта пыракан районсемпе колхозсенче çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пухса кĕртес ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Чылай колхозсем государствăна çĕрулми парса татрĕç ĕнтĕ. Вăрнар, Красноармейски, Çĕрпӳ районĕсем государствăна çĕрулми памалли графика ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Анчах нумай районсем çак тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлеççĕ. Çавна пула республика государствăна çĕрулми тата пахча-çимĕç памалли графика тултарса пыраймасть. Сăмахран, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Шăхасан, Вăрмар районĕсем государствăна çĕрулми графикпа памалăртнинчен 700—900 тонна сахалтарах панă. Çанталăк лайăх тăнă вăхăтра çак районсенчи руководительсем тĕрлĕ сăлтавсемпе витĕнсе çак паха ĕçе вăраха ярса пычĕç, кĕçех акă вĕсем çул пăсăлни çинчен мантарчĕ теме тытăнаççĕ.

Фронтпа çĕршыв валли çĕрулмипе пахча-çимĕçсем çителĕклĕ тата вăхăтра парасси — хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăракан задача. Çавăнпа та ку енĕпе панă графика кашни районпа колхозăн пĕр сăмахсăрах тултарса пырас пулать. Çывăх вăхăтрах çанталăк пăсăлма, сивĕ кунсем пулма пултараççĕ, ун чухне вара çĕрулми турттарма йывăр пулать тата вăл шăнса пăсăлма пултарать. Апла пулсан, колхоз е район мĕн чухлĕ хăвăртрах плана тултарать, уншăн çавăн чухлĕ усăллăрах пулать.

Çапла тăвас тесе, колхозсенче çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пухса кĕртес енĕпе бригадăсемпе звеносене кашни кун задани памалла, хирте кашни колхозника участоксем уйăрса парса ăна пухса илмелли сроксене кăтартмалла. Ĕçлеме пултаракан кашни колхозника ĕçе явăçтармалла.

Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пухса кĕртес ĕçе хăвăртлатнипе пĕрле вĕсене типĕтсе хатĕрлев пункчĕсене, хранилищĕсене турттарассине те вăйлатмалла, кăларнă çĕрулмине каçхине хиртех вырттарса хăварни пулмалла мар. Хранилищĕсем хатĕр мар пулсан, вĕсене халех юсаса лартмалла.

Государствăна çĕрулмипе пахча-çимĕç леçсе пама кашни колхозрах кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ уйăрмалла. Вĕсене вара колхоз государствăна çĕрулми памалли плана тултариччен урăх çĕре илмелле мар. Çак ĕçре колхозсемпе колхозниксен ĕнисемпе тата вăкăрĕсемпе анлăн усă курмалла.

Вăхăт кĕтсе тămасть

Авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсене нимĕнле çанталăкра та чарса тămалла мар!

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕН ГОСУДАРСТВАНА СРОКЧĔН ТЫРА ПАРСА ТАТАССИШĔН ПЫРАКАН ĂМĂРТĂВĔ
(1944 ÇУЛХИ ОКТЯБРЕН 5-МĔШЕ ТĔЛНЕ ИЛНЕ СВЕДЕНИСЕМ ТĂРĂХ)

Районсем	Тырă панă (процентпа).
Вăрнар	101.6
Калинино	96.8
Шупашкар	95.6
Чурачăк	93.8
Сĕнтĕр	93.7
Вăрмар	92.5
Ишлей	91.5
Куславкка	89.1
Советски	89.1
Çĕрпӳ	88.8
Элĕк	88.5
Муркаш	86.6
Красноармейски	86.5
Етĕрне	84.2
Улатăр	84.1
Октябрьски	83.2
Йĕпреç	82.7
Тăвай	79.7
Шăхасан	79.1
Первомайски	77.6
Сĕнтĕрвăрри	77.2
Канаш	75.1
Хĕрлĕ Чутай	75.0
Елчĕк	73.8
Çĕмĕрле	71.4
Комсомольски	71.1
Пăрачкав	68.7
Шăмăршă	62.0
Кувакино	61.6
Чкаловски	58.9

* * *

Республикăри колхозсем октябрĕн малтанхи пилĕк кунĕнче государствăна валли тырă унччинхи пилĕк кунхинчен 4.287 тонна сахалтарах турттарнă. Чкаловски, Кувакино районĕсем хытă кая юлса пыраççĕ. Ытти чылай районсем те юлашки пилĕк кун хушшинче хатĕрлев пункчĕсене тырă турттарас ĕçĕн хăвăртлăхне сӳрĕклетнĕ. Сăмахран, Комсомольски район сентябрĕн юлашки пилĕккунлăхĕнче 375 тонна тырă панă. Октябрĕн малтанхи пилĕккунлăхĕнче вара 197 тонна çеç турттарнă. Çавăн пекех Шăмăршă районĕнчи колхозсем те сентябрĕн юлашки пилĕк кунĕ хушшинче 422 тонна панă пулсан, октябрĕн малтанхи пилĕк кунĕнче пĕтĕмпе те 58 тонна çеç панă. Шăхасан районĕ иртнĕ пилĕк кун хушшинче унччинхи пилĕк кунхинчен 106 тонна сахалтарах турттарнă. Асăннă районсен руководителĕсем государствăна тырă парас ĕçе ертсе пырассине халĕ те ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ кăтартса панă пек çĕнетсе йĕркелемен-ха.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе кая юлса пыракан колхозсенчи йывăрлăхсене çĕнтерме халĕ пĕтĕм партипе совет, комсомол тата колхоз активне мобилизацилемелле. Кая юлса пыракан колхозсене туртăм вăйĕ парса пулăшмалла, вăл колхозсенчи колхозниксем хушшинче ăнлантару ĕçне анлăн сарса пымалла.

Юлса пыракан колхозсене — пулăшу

Октябрьски районра юлса пыракан колхозсене малта пыракан колхозсем пулăшассине йĕркеленĕ. Пĕр сентябрĕн 30-мĕшĕнче кăна Туçа ялсоветĕнчи колхозсенчен 30 лав, Çичĕпӳрт колхозĕнчен 15 лав, Калинин ячĕпе тăракан колхозран 10 лав ытти колхозсене пулăшу пама кайнă. Çапла вара пĕр кунтах 8 колхозран 130 лав юлса пыракан колхозсене кайса кĕлте турттарса панă.

З. М.

Ĕçсынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Сĕнтĕр районĕ тăрăх

69. «Сеялка» колхоз (колхоз председателĕ Пальков юлташ). Çак колхоз тырăсене 23 кун хушшинче вырса пуçтарнă, кĕрхи тырăсене августăн 23-мĕшĕнче акса пĕтернĕ, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн 1.660 пăт тырă парса хунă.

70. 1905 çулхи революци ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Благин юлташ). Ку колхоз кĕрхи тырăсене 9 кун хушшинче акса пĕтернĕ, государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 852 пăт тырă панă.

71. «Колос» колхоз (председателĕ Тямин юлташ). Колхоз 507 гектар çинчи тырра вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, акнă тыррăн 90 процентне ретлĕ сеялкăпа акнă, государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн 1.800 пăт тырă парса хунă.

14 колхоз авăн çапса пĕтерчĕç

ИШЛЕЙ, октябрĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Саратов облаçĕнчи Воскресенски районри Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва сарса яма чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă хаçатсене илсенех эпир районра виçĕ çĕрте — Ишекре, Ишлейре тата Хыркассинче колхозсемпе ялсовет председателĕсен тата колхозсенчи стахановецсемпе активистсен пухăвĕсене ирттертĕмĕр. Вăл пухусенче кашни колхоз социализмлă ăмăртура мĕн тумалли çинчен калаçса татăлтăмăр.

Пирĕн районри колхозсен тумалли ĕçсем нумай-ха. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана эпир 91,5 процент кăна тултарнă. Пирĕн колхозсем обязательствăсем тăрăх тырă парса татнă, анчах халĕ çĕрулми, пахча-çимĕç, сӳс-кантăр памалли пур-ха. Вĕсене пирĕн колхозсем октябрĕн малтанхи кунĕсенче парса татма пулаççĕ.

Районра авăн çапас ĕç хĕрсех пырать. Уяр çанталăкпа туллин усă курас тесе, молотилкăсемпе кăнтăрла та çĕрле те çапаççĕ. 86 колхозран 14-шĕ авăн çапса пĕтерчĕç. Вĕсен шутне «Большевик», «Красный танк», «Первое мая», Молотов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем кĕреççĕ. Авăн çапас ĕçре «Чăваш Коммуни», «Комбайн», «Ново-Марково», «Ишлей» колхозсем юлса пыраççĕ, вĕсем 40—60 процент таран кăна çапнă. Çак колхозсенче авăн çапас ĕçе хăвăртлатас тесе, МТС молотилкисене ытти колхозсенчен илсе ятăмăр. Çак юлса пыракан колхозсем те, ăмăртăва хутшăнса, октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерме обязательство илчĕç. Ăмăртăва хутшăннă хыççăн ĕç чылаях лайăхланчĕ, халĕ талăкĕпех авăн çапаççĕ. Районри малта пыракан «Парижская Коммуна», «Большевик», «Богатырь» колхозсем кĕрхи çĕртме туса пĕтерчĕç. Анчах та районĕпе илсен, 50 процент ытларах çеç сухаланă. «Депутат», «Янду» колхозсем çак паха ĕçе тытăнман-ха.

Калининецсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланине колхозниксемпе колхозницăсене тĕплĕн ăнлантарса пама районри актив тухса кайрĕ. Малтанхи хыпарсем тăрăх, районри колхозсем октябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлеме обязательство илеççĕ.

И. ПИДУГАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Пирĕн обязательствăсем

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ. (Телефонпа). Октябрĕн 5-мĕшĕнче кунта колхозсемпе ялсовет председателĕсен тата районри активăн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура Саратов облаçĕнчи Калинин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсем чĕнсе каланине сӳтсе-каврĕç. Колхозниксемпе колхозницăсене калининецсен чĕнĕвне ăнлантарса пама тата колхозсене кулленхи ĕçре пулăшса пыма районри активран 63 çын колхозсене тухса кайрĕç. Халĕ кашни колхозрах колхозниксен пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе район кая юлса пырать. Колхозсем халĕ, уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татма йышăнаççĕ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе чылай çĕрте мĕнпур лашасенчен çуррине тата вăкăрсемпе ĕнесене кӳлеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем кăнтăрла та çĕрле те ĕçлеме обязательствăсем йышăнаççĕ.

С. ИЛЮШКИН.

Ӳкерчĕк çинче: Совет Союзĕн Икĕ хут Геройĕ гварди капитанĕ А. В. Алелюхин.

Г. ШИРОКОВ чотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Гварди красноармеецне Ю. В. Смирнова Совет Союзĕн Геройĕ ятне парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çавăн чухне хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн гварди красноармеецне Юрий Васильевич Смирнова, Ленин орденĕпе тата «Ылттăн çăлтăр» медальпе наградăласа, Совет Союзĕн Геройĕ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕ.

Гварди красноармеецĕн Юрий Смирновăн геройла ĕçĕ

Н. районĕнче тăшман оборонине татма тапăнлăн атакăланă чухне Юрий Смирнов красноармеец вăйлă аманнă пулнă. Нимĕçсем тытса илнĕ чухне вăл пĕр тăнсăр выртнă. Гитлеровецсем ăна хăйсен блиндажне сĕтĕрсе кайнă та «допрос» тума пуçланă. Хӳтлĕхсĕр тăрса юлнă аманнă красноармеецран кирлĕ хыпарсем илес тесе, фашистла пуçкасакансем ăна пур майпа та асаплантарнă. Ирсĕрсем çав красноармееца хăма çумне пăтапа çапса лартнă, кăкăрне çĕçĕпе чикнĕ, пуçне пăта çапса кĕртнĕ, унтан тĕрлĕ майпа мăшкăлласа кулнă. Юрий Смирнов — ленинла-сталинла комсомол пăхса ӳстернĕ çын — çав асапсене пурне те чăтса ирттернĕ, хамăр тăван çĕршывăн тăшманĕсене пĕр сăмах та каламан. Асапланса вилессинчен хăрамасăр, вăл Хĕрлĕ Çар умĕнче тупа тунине чыслăн пурнăçа кĕртнĕ.

1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕн кавалерне гварди красноармеецне Юрий Смирнова, СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, хастаррăн та паттăррăн çапăçнăшăн Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ленинград фрончĕн çарĕсем САРИНА (ЭЗЕЛЬ) утравĕ çине ăнăçлăн десант антарнă, тăшман хирĕç тăнине çĕнсе тăкнă та утравăн хĕвелтухăç пайĕнче 40 километр сарлакĕш плацдарм тытса илнĕ, 25 километр шалалла кĕрсе кайнă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ОРИССАРЕ, ПАЙДЕ, ВЯЛЬТА, РАНАКЮЛА, КУНИНГУСТЕ, ТАГАВЕРЕ, РИВЕЛА, МУСТЛА, САРЕ, ПАММАНА, МЕТСКЮЛА, КАРЬЯ, ПЯРСАМА, РЯГИ, РАТЛА, КЫННУ, КОКСИ, КАХТЛА ятлă пысăк ялсем.

Румынсен АРАД хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Румынипе Венгри чикки урлă каçса кайнă, Германипе Венгри çарĕсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Венгри çĕрĕнче ДЬЮЛА хулипе чугун çул станцине, КЕТЕДЬХАЗА хулипе чугун çул узелне, МАХО хулипе чугун çул узелне, БАТТОНЯ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — УГРА, ЖАДАНЬ, ГЕСТ, ДЬЮЛАВАРИ, ЕЛЕК, НАДЬ-КАМАРАШ, НАДЬ-АЛМАШ, КЕВЕРНЕШ, ДОМБИРАТОШ, КУНАГОТА, МАДЬЯ-РБАНХЕДЬЕШ, ВЕГЕДЬ-ХАЗА, МЕЗЕХЕДЬЕШ, ПАТВАРОШ, ЧАНАДПАЛОТА, КИРАЛЬХЕДЬЕШ, АПАТФАЛЬА ятлă пысăк ялсем.

Югослави çĕрĕнче ПЕТРОВГРАД хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем ВОЙВОДА СТЕПА, РУСКО-СЕЛО, НОВА ЦЕРНЯ, ТОРДА, КУМАНЕ, НОВИ БЕЧЕЙ ятлă ялсене тытса илнĕ.

Румынсен ТУРНО-СЕВЕРИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, Югославин ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Югослави çĕрĕнче ПОПОВИЦА, ЦРНАЙКА, ЛУКЕ, ЖАГУБИЦА, ШАРБАНОВАЦ, МЕТОВНИЦА, ГАМЗИГРАД, ЛУБНИЦА, ГРЛИШТЕ, ЛЕНОВАЦ, БРГОВАЦ, БАЧЕВИЦА, ЗАГРАДА, БОРОВАЦ, ВРБИЦА, МАЛЫЙ ИЗВОР ятлă ялсене туртса илнĕ. Пирĕн çарсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, нимĕç çарĕсен МИЛАНОВАЦ, КЛОКОЧЕВАЦ, ЗАЕЧАР районĕсенчи самаях пысăк ушкăнĕсене çавăрса илнĕ те вĕсене пĕтерсе тăкассишĕн ăнăçлăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă тата разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Октябрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 90 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 7 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Ленинград фрончĕн çарĕсем çĕрле Вийке-Вяйн проливĕ урлă каçнă та Сарема (Эзель) утравĕ çинче плацдарм туртса илнĕ. Утрав çине чи малтан Пэрна генерал-лейтенант командир пулса ертсе пыракан эстонецсен корпусĕн чаçĕсем аннă. Совет боецĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та нимĕçсене çыран хĕррийчен утрав çине шалалла хăваласа янă, çапла вĕсем хамăр пехотăн тĕп вăйĕсене, хирти артиллерие тата хăй тĕллĕн çӳрекен артиллерие утрав çине каçма май туса панă. Утравшăн пыракан çапăçусен малтанхи сехечĕсенчех 600 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Малалла наступлени туса пырса, пирĕн çарсем утрав ăшне шалалла 25 километр кĕрсе кайнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Пирĕн авиаци Сарема (Эзель) утравĕ çинчи десант чаçĕсене вăйлăн пулăшса тăнă. Пирĕн летчиксем, бомбăсем пăрахса штурмласа, тăшманăн артиллери тата миномет батарейисене нумай пусарса лартнă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн бомбардировщиксем нимĕçсен Курессаре портĕнчи транспорчĕсене тапăннă. Бомбăсем тӳрех пырса тивнипе 4 транспорт шыва путнă. Тăшманăн Курессаре портĕнче тăнă ытти темиçе суднине самаях вăйлă сиенленĕ.

* * *

Румынсен Арад хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă. Пирĕн пехотинецсем, артиллеристсемпе летчиксем вăйлăн пулăшнипе, тăшман оборонине татнă та Венгри çĕрне кĕрсе кайнă. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, совет çарĕсем венгерсен Дьюла хулине туртса илнĕ. Мако хулишĕн хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Нимĕçсемпе венгерсен чаçĕсем пирĕн наступлени туса пыракан çарсене хирĕç контратакăсем пуçласа янă. Контратакăсене сирсе янă чухне тăшман пехотине пĕр полка çити тата нимĕçсен 15 танкне пĕтерсе тăкнă. Тăшмана халран кăларнă хыççăн пирĕн çарсем гитлеровецсене таткăлăн пырса çапнă та Мако хулине тытса илнĕ. Пĕр участокра пирĕн çăмăллăн куçса çӳрекен соединенисем тăшманăн пĕр ушкăнне çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă. 500 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. 38 тупă, çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 150 автомашина тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Югослави çĕрĕнче Петровград хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем Руско-Село ятлă яла туртса илнĕ. Ку ял Велика Никинда хулине пырса кĕмелли çулсене хӳтĕлесе тăнă, çавăнпа ăна нимĕçсем хăйсен аллинчен ярасшăн пулман. Пирĕн подразделенисем аякран кайса гитлеровецсен флангне тухнă та, çав тери хăвăрт пырса çапса, тăшмана çĕмĕрсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Пирĕн çурçĕр-хĕвеланăç еннелле наступлени туса пыракан ытти чаçсем тăшмана Тисса шывĕн леш енне хăваласа янă та Нови-Бечей ятлă пысăк яла туртса илнĕ. Шыв урлă каçса тарма тăнă тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене нумайĕшне пĕтерсе тăкнă. 1.200 нимĕçе ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Румынсен Турну-Северин хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Югослави çĕрĕнче пирĕн çарсем çапăçса малалла тапăнса пынă. Милановац тата Клохочева районĕсенче Хĕрлĕ Çарпа Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем тăшмана çавăрса илнĕ. Çав çавăрса илнĕ ушкăнран пĕр пысăк отряд Плавна ялне тарса тухнă. Вара Плавна ялĕнче урамра хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Совет боецĕсемпе Югослави боецĕсем çав отряда пĕтерсе тăкнă. Çав районрах пĕр чаçри подразделенисем нимĕçсен аркатса тăкнă горно-стрелковăй дивизийĕн батальонне хăваласа пынă. Пирĕн боецсем пĕр ансăр ту хушăкĕнче гитлеровецсене хăваласа çитнĕ те нимĕçсене тарса тухмалли çук вырăна хĕстерсе лартнă. Кăштах хирĕç тăнă хыççăн 400 нимĕç салтакĕпе офицерĕ ытла, алăри хĕçпăшалне пăрахса, тыткăна парăннă. Тепĕр участокра пирĕн çарсем Лубница, Леновац, Грлиште ялĕсене туртса илнĕ те чугун çулсемпе шоссе çулĕсен паха узелĕ пулса тăракан Звечар ялне хӳтĕлекен нимĕç салтакĕсен гарнизонне çавăрса илнĕ. Нимĕçсем, темĕн чухлĕ хăтланса та, çав ункăран татса тухма пултарайман. Тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен йывăр сухатусем кӳнĕ. Пирĕн çарсем трофейсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

* * *

Дрогобыч облаçĕнчи Турка хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çăмăллăн куçса çӳрекен отрядсем тăшманăн çирĕплетнĕ районне аркатса тăкнă. Пĕр ял тата виçĕ çӳллĕ вырăн туртса илнĕ. Совет автоматчикĕсем гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. 5 тупă, 21 миномет тата боеприпас склачĕ тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн торпедăсем пăрахакан самолечĕсем нимĕçсен пĕтĕмĕшпе 15.000 тонна таякан икĕ транспортне шыва путарнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Республикăри хулясене районсенчи апат-çимĕç комбиначĕсемпе промкомбинатсен тата промысла кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи сентябрь уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ, апат-çимĕç комбиначĕсемпе промкомбинатсен тата промысла кооперации артелĕсен ăмăртăвĕн сентябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура çаксем мала тухнă тесе йышăннă:

Апат-çимĕç комбиначĕсен ăмăртăвĕнче Канаш хулинчи комбинат (директорĕ Захаров юлташ, хула совет исполкомĕн председателĕ Калмыков юлташ) мала тухнă. Вăл сентябрьти плана 258 процент тултарнă. Çапла вара, август уйăхĕнчи тавшипкан, 10,9 процент ытларах продукци панă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Куславкка районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕнчен илсе, Канаш хулинчи апат-çимĕç комбинатне памалла тунă тата вăл ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăнăшăн премине 6.000 тенкĕ укçа панă.

Сентябрь уйăхĕнче Вăрмарти тата Вăрнарти апат-çимĕç комбиначĕсем хăйсен планне палăртнă.

Промкомбинатсен ăмăртăвĕнче Йĕпреç районĕнчи промкомбинат (управляющийĕ Храсов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Петров юлташ) мала тухнă. Вăл сентябрьти плана пĕтĕм продукци тухса кăларас енĕпе 109,4 процент, халăх кулленхи таварĕсем тухса кăларас енĕпе 114,1 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Ишлей районĕнчи промкомбинатран илсе Йĕпреç промкомбинатне памалла тунă.

Ăмăртура мала тухнă Шăхасан районĕн промкомбинатне 10.000 тенкĕ, Шупашкар хулинчи промкомбината 5.000 тенкĕ премин панă.

Сентябрь уйăхĕнче Вăрнар, Куславкка, Сĕнтĕр, Çĕмĕрле районĕсенчи, Янтăкри тата Канаш хулинчи промкомбинатсем хăйсен планне палăртнă.

Промысла кооперации артелĕсен ăмăртăвĕнче Шупашкарти «Красный мебельщик» (председателĕ Егоров юлташ, хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) мала тухнă. Вăл сентябрь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци тухса кăларас енĕпе 275 процент, халăх кулленхи таварĕсем тухса кăларас енĕпе 325 процент тултарнă. Çапла вара Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне «Красный мебельщик» артельне памалла тунă тата вăл ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăнăшăн премине 6.000 тенкĕ укçа панă.

Ăмăртура мала тухнă Канашри «Авангард» артеле 5.000 тенкĕ, Сĕнтĕрвăрринчи «Поротой» артеле 4.000 тенкĕ премин панă.

Сентябрь уйăхĕнче Шупашкарти «Металлист», «Пекарь», «Кожуррявь», «Лесохимик», Шупашкар районĕнчи «Заволжье», Йĕпреç районĕнчи «Красный строитель» артелĕсем хăйсен планне палăртнă.

Артель коллективĕ хăйĕн ĕçне лайăхлатрĕ

СОВЕТСКОЕ, октябрĕн 7-мĕшĕ. Районти «Трудовик» артель август уйăхĕнче хăйĕн производство программине тултараймасăр юлнă. Артель коллективĕ Октябрь уявне чыслă ăмăртăва пуçăнчĕ. Артель сентябрьти плана иртерех тултарчĕ.

Артельте атă-пушмак çĕлекен цех малта пырать. Унта ĕçлекен чылай рабочисем икшер норма тултараççĕ. Çĕвĕ çĕлекен цех та йĕркеллĕ ĕçлеме пуçларĕ. Вăл цехра иртнĕ уйăхсенче стахановецсем пачах та пулман. Халĕ С. Васильева, О. Васильева тата ытти чылай юлташсем ĕç нормине 150-шар процент таран тултараççĕ.

Я. СИГАЙ.

ШАХТЫ ХУЛИНЧЕ ТРАМВАЯ ХУТА ЯНА

Фашистла нимĕç оккупанчĕсем Шахты хулинчи коммунальнăй хуçалăха калама çук пысăк сиен туса хăварнă. Вĕсем трамвай çулĕсемпе вагонĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. Çав трамвай вăл нумай шахтăсене хула варрипе çыхăнтарса тăнă. Халĕ трамвайăн 15 километр тăршшĕ çулне юсаса хута янă.

Трамвая юсаса хута ярас ĕçе хулари ĕççыннисем активлăн хутшăнаççĕ. (ТАСС).



Алтайри трактор завочĕ Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче ĕçлеме пуçланă. Ÿкерчĕк çинче: «АТЗ—НАТИ» тракторсем конвейер çинчен анаççĕ.
А. ФАТЬЕВ фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Алтайри трактор завочĕ

1942 çулхи кĕркунне колхозсен уйхирĕсенче малтанхи хут «АТЗ» маркăллă гусеницăллă тракторсем ĕçлеме тытăннă. Вĕсене Алтайри трактор заводĕнче туса кăларнă.

Çав завод Кулундино çеçенхирĕ варринче вырнаçнă Рубцовск ятлă пысăк мар хулара сакăр уйăх хушшинче ÿссе ларнă. 1942 çулхи январь уйăхĕнче кунта Харьковри трактор заводĕнчи оборудование куçарса килнĕ. Унта, çав оборудованисĕр пуçне, тракторсем тума май паракан урăх нимĕн те пулман. Хулара промышленность предприятийĕсем те, электростанци те, водопровод та, çавăн пекех тата рабочисен кадрĕсем те пулман.

Анчах строительсем пĕтĕм йывăрлăхсене çĕнтерчĕ. Сакăр уйăх хушшинче производство цехĕсен темиçе çуртне туса лартнă, шыв илес ĕçе йĕркеленĕ, теплоэлектроцентралĕн пĕрремĕш турбинине ĕçе кĕртнĕ. Конвейер çинчен «АТЗ» маркăллă пĕрремĕш тракторсем тухнă. Завод çывăхĕнче рабочисемпе служащисем валли нумай хутлă чул çуртсен хули ÿссе ларнă. Унта çакăр пĕçерекен завод, шкул, ачасен сачĕ тата ясли, амбулатори, поликлиника, столовăй, магазинсем пур.

Заводра тракторсем туса кăларнипе пĕрлех, строительство ĕçĕ те анлăн сарăлса пынă. Завода тăвас пĕтĕм ĕçсене пĕр вăхăтрах пурнăçа кĕртсе пынă. Цехсене унти станоксене вырнаçтарса лартнă хыççăнах ĕçе кĕртнĕ. Строительствăра пирвайхи хут ĕçлеме тытăннă темиçе пин çамрăк ачасемпе хĕрачасем йывăр профессисемпе ĕçлеме вĕреннĕ.

1943 çулхи декабрь уйăхĕнче завод конвейерĕ çинчен пинĕмĕш трактор тухнă. Çак вăхăт тĕлне заводри 37 производство çуртне ĕçе кĕртнĕ. Вĕсен пысăкĕшĕ 81.000 тăваткăл метр шутланать. Унсăр пуçне 28.000 тăваткăл метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем тунă, завода электроэнерги çителĕклĕ парса тămалла тунă.

Халĕ ĕнтĕ Алтайри трактор завочĕ кăтартуллă предприяти пулса тăрать. Унта «АТЗ—НАТИ» маркăллă гусеницăллă тракторсем массăллăн туса кăлараççĕ. Ку заводран МТС-сем тракторсемпе запаслă пайсем сахал мар илчĕç ĕнтĕ. Нумаях пулмасть заводри конструкторсем çĕнĕ йышши машина конструкциленĕ. Çав машина ыттисенчен хăватлăрах пулнипе, детальсем çирĕп пулнипе тата илемлĕрех пулнипе палăрса тăрать.

Рубцовск хули те улшăннă. Çеçенхирти лăпкă хуларан вăл социализмлă индустрин Алтайри паллă центрĕ пулса тăнă. Халĕ хулара театр, больница тата çĕнĕрен культура учрежденийĕсем тăваççĕ.

Харьковри трактор заводĕнче халĕ юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Унти оборудование Алтайри трактор заводне тунă çĕре панă пулин те, ăна малтанхи хăватпах ĕçлемелле тăваççĕ.

И. РАН.

Дунай шывĕн çурçĕр хĕрринче

САПАÇУРИ ÇАР, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Югославири темиçе хулана фашистла захватчиксенчен ирĕке кăларнă совет чăсĕсем çĕнтерÿллĕ наступлени туса пыраççĕ. Нимĕçсем Дунай шывĕн çурçĕр енне васкаса çĕнĕ дивизисем илсе пыраççĕ, пирĕн чăссене хирĕç хытă çапăçаççĕ. Пĕр канал çинче уйрăмах вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Унта тăшман, йышлă çулсемпе пысăк ялсем çине таянса, çирĕп оборона туса хунă. Унта пирĕн боецсен нимĕçсен йышлă контратакисене сирсе яма тивет. Нимĕçсем унта хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тытса илме, пире Тимок шывĕ леш енчен хăвалама тăрăшаççĕ. Анчах та совет подразделенийĕсем çав атакăсене сирсе яраççĕ çеç мар, тăшмана утăм хыççăн утăм хĕссе пыраççĕ. Темиçе тĕлте канал урлă каçса кайнă ĕнтĕ. Ку вăл тăшман оборонин тепĕр линине темиçе тĕлте татнине пĕлтерет.

Чугун çул патĕнче те вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Çав çулпа юнашар ларакан ялсене нимĕçсем опорнăй пунктсем туса хунă, çав пунктсен речĕ оборонăн хăватлă линийĕ пулса тăнă. Телятников майорăн батальонĕ çĕрле пĕр ял патне пырса çитсен, разведчиксем ăна çав ял патĕнче тăшман персе тămалли хатĕрсем питĕ нумай вырнаçтарса лартни çинчен пĕлтернĕ. Телятников вара çав ялтан айккипе иртсе кайма йышăннă. Пирĕн боецсем, хăйсем ывăннине, йĕпе-сапана тата тĕттĕм тăнине пăхмасăрах, çав çĕнĕ задачăна ăнăçлăн пурнăçланă. Çула татса пăрахса, тул çутăлса килнĕ тĕле вĕсем тăшман тылне пырса тухнă. Çакна сиссен, нимĕçсем контратака тунă. Узарашвили лейтенантăн роти çав контратакăна сирсе янă. Пирĕн подразделени вара, вăйлăн пырса çапса, нимĕçсене çав ялтан хĕссе кăларнă.

Часах çĕнĕ рубежра çапăçусем пуçланса кайнă. Унти вырăн çырма-çатраллă, вăрманлă, сăртлă, сылтăм енче Дунай шывне юхса кĕрекен Караш шывĕ кукăр-макăр юхса выртать. Çав вырăнти меллĕ условисемпе усă курса, тăшман унта та темиçе хутчен контратакăсем тунă, анчах çав контратакăсем ăна усă кÿмен.

Врашац хулипе Белград хули хушшинчи шоссе тăрăх малалла куçса пыракан подразделенисем Алибунар ятлă çирĕплетнĕ пысăк пункта тытса илнĕ. Унтан, тăшмана хăваласа пырса, Владимировац леш енче çапăçма пуçланă. Владимировац вăл тăшманăн çав çул çинчи тепĕр опорнăй пункчĕ пулса тăрать. Пирĕн чăссем ăна та тытса илнĕ.

Югослави ялĕсенчи халăх Хĕрлĕ Çара пур çĕрте те калама çук савăнса кĕтсе илет. Словенсемпе сербсем боецсене Югославин оккупациленĕ районĕсенче нимĕçсем тискер ĕçсем туни çинчен каласа параççĕ.

— Нимĕç пуçкасаканĕсем славянсене штыксемпе тата бомбăсемпе хăратма, пире тĕрмесенче çĕртме, чуралăха хăваласа кĕртме шутланă, — тесе каласа парать пирĕн офицера старик серб Павел Петка.—Анчах та тăшман пирĕн халăха парăнтараймарĕ. Хĕрлĕ Çар, тăшмана вырăс çĕрĕнчен хăваласа ярса, пире пулăшма килессине эпир пĕлнĕ. Халĕ ĕнтĕ эпир нимĕçсене совет боецĕсемпе тата офицерĕсемпе пĕрле кĕрешсе ашалантарăпăр, — тет старик.

А. МАЛИБАШЕВ.

Çамрăксене ФЗО шкулĕсемпе училищисене вĕренме илмелли призыва лайăх ирттерер

Октябрĕн 1-мĕшĕнче республикăри районсенче çамрăксене ФЗО шкулĕсемпе ремесло тата чугун çул училищисенче вĕренме илес тĕлĕшпе призыв комиссийĕсем ĕçлеме тытăнчĕç. Кăçал пирĕн республикăн 1.700 çамрăка вĕренме ямалла.

Çамрăксем ĕç резервĕсен шкулĕсемпе училищисенче вĕренме пысăк хаваслăхпа каяççĕ. Çапла, Çĕмĕрлери кăçал кăна уçăлакан ремесло училищине вĕренме кĕме 87 çамрăк заявлени панă. Çавăн пекех Канашри чугун çул училищине кĕме 60 çамрăк, Улатăрти чугун çул училищине кĕме 65 çамрăк заявленисем панă. Республикăри шкулсемпе училищĕсене 5 кун хушшинче кăна хăйсен ирĕкĕпе 287 çамрăк кĕнĕ.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, призыв çителĕксĕр пырать-ха. Призыв йĕркипе Сĕнтĕрвăрринчи ФЗО шкулне 26 çамрăка çеç илнĕ. Республикăри хăшпĕр районсенче призыв комиссийĕсем тивĕçлипе ĕçлеме те тытăнман. Партипе комсомол организацийĕсем те çак ответлă ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхмаççĕ.

Вăхăт иртсе пырать. ФЗО шкулĕсемпе училищĕсене вĕренме илмелли плана срокра тата ăнăçлăн тултарас тесен, призыв комиссийĕсен ĕçне лайăхлатнипе пĕрлех, çамрăксем хушшинче политикăллă массăллă ĕçе те анлăн сарса пымалла. Çамрăксене вĕренÿ условийĕсемпе паллаштармалла, ФЗО шкулĕсемпе училищĕсенче вĕренекенсене государство пысăк пулăшу пани çинчен каласа кăтартмалла. Çак ĕçре комсомол организацийĕсем хăйсен пысăк активлăхне кăтартма тивĕçлĕ.

П. ПОЗЯЙКИН.

Ялти çамрăксен шкулĕсене уçма вăхăтра хатĕрленес пулать

СССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, пысăк ялсемпе колхозсенче тата МТС-сенче шкулсем уçаççĕ. Çав шкулсене производствăран татăлмасăр вĕренме ялти çамрăксене илеççĕ. Халĕ районсенче шкулсем уçма хатĕрленес ĕç пырать. Вăрмар районĕнчи пур колхозсенче те комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсем пулса иртнĕ. Вĕсенче правительство постановленине пурнăça кĕртмелли мероприятисене тĕплĕн сÿтсе-явнă. Çакăн хыççăн вĕренме тивĕçлĕ çамрăксене шута илнĕ. Пĕтĕмпе 300 çамрăка ытла вĕренĕве явăçтарма палăртнă. Вĕсем валли районри 7 çул вĕренмелли тата вăтам шкулсем çумĕнче 19 çĕрте каçхине вĕренмелли классем уçаççĕ. Ялти çамрăксен шкулĕсене уçма хатĕрленес тĕлĕшпе сутĕç органĕсене комсомол организацийĕсен тимлĕн пулăшмалла. Вĕсем вĕренÿ çулне хатĕрленес енĕпе тăвакан мероприятисене пурнăça кĕртнĕ çĕре активлăн хутшăнма тивĕçлĕ.

Анчах та чылай районсенче çамрăксен шкулĕсене уçма хатĕрленес ĕç питех те сÿрĕк пырать-ха. Йĕпреç, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсенче, тĕрĕссипе илсен, ку тарана çитсе те тивĕçлипе хатĕрленме тытăнман. Сĕнтĕрвăрри районĕнче миçе шкул уçмаллине те палăртман. Элĕк, Чкаловски районсенче миçе шкул уçассине вĕренме тивĕçлĕ çамрăксене шута илмесĕр палăртнă.

Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски районсенче те ĕçсем япăх пыраççĕ. Унта çамрăксене правительство постановленине те ăнлантарса паман. Çавăнпа ĕнтĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнче октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне шкулсене вĕренме илме ыйтса пурĕ те 5 заявлени çеç панă. Калинино районĕнчи сутĕç пайĕпе комсомол райкомĕн работникĕсем хăйсен начар ĕçне шкулсенче вĕренме çамрăксем çук тенипе витме пикенеççĕ.

Ялти çамрăксен шкулĕсенче вĕренÿ пуçланиччен шутлă кунсем çеç юлчĕç. Çавăнпа та вăл шкулсене уçма хатĕрленес ĕçе татăклăнах хăвăртлатни кирлĕ. Вĕренÿ хатĕрĕсене çителĕклĕ таран тупса çитернипе пĕрлех, çамрăксене правительство постановленийĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла. Комсомол активĕн кашни çамрăкпа уйрăмăн калаçса, ăна вĕренме кĕме пулăшмалла.

ВЛКСМ райкомĕсемпе пуçламĕш организацисем ялти çамрăксен шкулĕсенче вĕренÿ ĕçне лайăх йĕркелес тĕлĕшпе учительсене куллен пулăшса пыма тивĕçлĕ.

А. ТОКАРЕВ.

Тĕнчери лару-тăру

Фронтсенчи ĕçсем гитлерла Германин лару-тăрăвĕ малалла япăхланса пыни çинчен калаççĕ. Фашистла нимĕç çарĕсене Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче çĕнĕрен пысăк поражениçем тÿстерне. Хĕрлĕ Çар Эстони республикин территорине гитлерла ирсĕрсенчен ирĕке кăларса çитерчĕ. Нимĕçсене Даго, Вормси тата Муху утравĕсем çинчен шăлса ывăтнă. Эзель утравне ирĕке кăларсан, Рига заливĕ нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасалса çитет. Халех ĕнтĕ, Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерÿсене пула, Балтика çинчи лару-тăру тĕпренех улшăнчĕ. Унта нимĕçсем хăйсен стратегиллĕ чи паха позицийĕсене çухатрĕç.

Иртнĕ эрнере совет çарĕсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх комитечĕпе тата Югославин командованийĕпе килĕшÿ тунă хыççăн, Дунай шывĕ урлă каçрĕç те Югослави çĕрĕ çине кĕрсе кайрĕç. Хĕрлĕ Çар кунта нимĕç çарĕсене чылай пысăк поражениçем тÿстерчĕ, вăл хăйĕн плацдармĕсене, тăшманран тасатса, ытларах та ытларах сарса пырать. Югослави столицине—нумай асап курнă Белград хулине — ирĕке кăларасси халĕ ĕнтĕ инçе юлмарĕ.

Фашистла нимĕç захватчикĕсен юлашки «союзникĕ» Венгри умне те вăрçăра пуçĕпех пĕтсе ларас хăрушлăх тухса тăчĕ. Совет çарĕсем, Венгрие çурçĕртен, хĕвелтухăçĕнчен тата кăнтăртан хăратса тăрса, ăна аллă фронтпа çавăрса илеççĕ. Венгрири ялçра тăракан çынсен сехрисем хăпнă ĕнтĕ. Балкана ирĕке кăларасси ÿссе пыракан хăвăртлăхпа пулса пырать, çакă ĕнтĕ вăл, тĕрĕссипе, Германин Кăнтăр-Хĕвелтухăç Европăри оборонине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкасси патне илсе çитерет. Вăрçă кунта та ĕнтĕ Гитлер шăтăкĕ патне çывăхах пырса çитрĕ.

Хĕвеланăçĕнче Англипе Америка çарĕсем, хăйсен резервĕсене çывăхарах куçарса пырса, тăшмана çĕнĕрен те хăватлăнрах пыра-пыра çапма хатĕрленеççĕ. Пирĕн союзниксем, Гри-Нэ сăмсахне тата Кале крепоçне йышăнса, пысăк çитĕнÿ турĕç. Çакăнтан нимĕçсем тăватă çул хушши Англин кăнтăр çыранне персе тăнă. Çакăнтан вĕсем хăйсен «самолет-снарячĕсене» Лондона аркатма кăлара-кăлара янă. Акăлчансем кунта нимĕçсенне инçете перекен нумай туппиcене тата «вĕçекен бомбăсем» кăларса ямалли 300 площадкине тытса илнĕ.

Аахен, Нанси тата Бельфор районĕсенче союзниксен çарĕсем малалла куçса пыраççĕ. Чăн та, вĕсем малалла куçса пырас хăвăртлăх каштах чакрĕ. Анчах çакă вăл урăхла пулма та пултараймасть. Союзниксен çарĕсем пĕтĕм Франципе Бельги урлă каçрĕç. Вĕсем Голландие пырса кĕчĕç тата Германи территорийĕ çине çĕмĕрсе кĕрсе кайрĕç, çав вăхăт хушшинче вĕсем 550 километртан пуçласа 700 километра çити малалла куçрĕç. Вĕсен çулйĕрĕсем вăрăмланчĕç. Çавăнпа та, çарсене снабжени парса тăрас ĕçе йĕркелес, çĕнĕрен пырса çапма хатĕрленес тесен, вĕсене каштах вăхăт кирлĕ.

Çав хатĕрленĕве нимĕçсен фашистла пропаганди темĕнле «сывлăш çавăрмалли» вăхăт пек туса кăтартма, союзниксен наступленийĕ вăрахланнине — Германи оборони вăйланни пек, хăйсен «сверхтотальнăй мобилизацийĕн» çитĕнĕвĕ пек туса кăтартма хăтланать.

Тĕрĕссипе кунта нимĕнле сывлăш çавăрасси те çук. Çакă паллă: вăрçăра уявсем те, кулленхи палăрман ĕçлĕ кунсем те пулаççĕ. Хальхи тапхăр—çавăн пек палăрман ĕçлĕ тапхăр пулса тăрать те ĕнтĕ. Анчах çак тапхăрта союзниксем хĕрсех ĕçлеççĕ, кăшт каярахран çакă вара тăшмана пуçĕпех аркатса тăкасси патне илсе пырĕ.

Гитлерла пуçлăхсем çавна ăнланаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Геббельс Германи халăхне «кашни çурт крепость пулса тăма» тивĕçли çинчен асăрхаттарать. Çакă ĕнтĕ вăл «Зигфрид линийĕ» пек укрепленисем çине нимĕçсем хăйсем те ытлашши шансах кайманнине пĕлтерет. Геббельс халĕ мĕнпур Германи халăхĕн — ваттисен те, хĕрарăмсен те, ачасен те—тăшмана хирĕç тăма кирли çинчен калаçать. Çакă вăл гитлерла министр Германи çарĕ çине те ытлашши пысăк шанчăках хывманнине пĕлтермест-ши? Нимĕç командованийĕн резервсем çук çке-ха. Ют çĕршывсенчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тăракансем: нимĕçсен хĕвеланăçĕнче хăйсен 800 километра çити тăсăлса выртакан фронтне хÿтĕлеме вăтамран 30 дивизи пур пулĕ, тесе шутлаççĕ. Çакă ĕнтĕ вăл гитлеровецсен хăйсен вăйĕсене пĕтĕм фронт тăрăх сапаласа яма лекессине, е хăйсен оборонинче вăйçăр вырăнсем нумай хăварма лекессине пĕлтерет. Çав вăхăтрах союзниксен çарĕсен йышĕ тăтăшах ÿссе пынине те шута илмелле. Кун çумне тата союзниксем сывлăшра нимĕçсенчен нумай хут вăйлине те, вĕсен танковăй соединенийĕсем çав тери хăватлă пулса тăнине те хушмалла.

Çук, ку сывлăш çавăрмалли вăхăт мар! Ку вăл мĕнпур фронтсенче çĕкленес хăрушă тăвăл умĕнхи лăпкăлăх кăна пулса тăрать. Пулас наступлени тăвăлĕ нимĕçсен оборонине шăлса ывăтĕ, Гитлерăн хĕçпăшаллă вăйĕсене пуçĕпех çапа-çапа аркатĕ. Нимĕçсем тарăхаççĕ. Çавăнпа та пирĕн тата пирĕн союзниксен хăйсен вăйĕсене шанса тăрса лăпкăрах пулма сăлтав пур та ĕнтĕ. Гитлерла Германие хирĕç çапăçакан çĕршывсен вăйĕсем сывăх вăхăтрах тăшмана татăкланах çапса аркатĕç.

* * *

Поляксен реакциллĕ эмигранчĕсен пуçлăхĕсем Варшавăра пуçласа янă авантюра намăсла пĕтсе ларчĕ. Варшавăра пуçланнă пăлхавăн руководителĕсем нимĕçсене парăннă, вĕсем фронт урлă Польша çарĕпе Хĕрлĕ Çар патне татса тухма шутламан та. Рачкевич — Сосновский ушкăнĕ ячĕпе ĕçленĕ «Бур генерал» тата краевой армин командованийĕ Варшава çыннисене питех те тискеррĕн улталанă, вĕсем нимĕçсене сутăннă.

Краевой армин текен çарăн командованийĕ Варшавăра çапăçакан нумай пинлĕ поляксене кăна мар вĕлерттерсе пĕтернĕ, вăл çавăн пекех тата чĕрĕ юлнă çынсене те гитлерла палачсен аллине панă. Рачкевичăн ушкăнĕ Польша халăхĕ курайман Сосновский вырăнне преступникла «Бур генерала» суйласа лартнисĕр пуçне урăх нимĕн те «лайăххи» тăваймана. Çапла ĕнтĕ поляксен эмиграцири «правительстви» хăйĕн тăшманла чунне, вăл поляк халăхĕнчен, Хĕрлĕ Çарпа пĕрле хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн кĕрешекен чăн-чăн Польшăран, çĕрпе пĕлĕт пекех аякра тăнине уççăн кăтартса пачĕ.

Поляк халăхĕ çав сутăнчăксенчен ылхансах пăрăнĕ. Вăл, халăх ирĕклĕхĕн комитечĕ тавра пĕрлешсе, таччăн пĕтĕçсе тăрса, фашистла нимĕç пусмăрçисене хирĕç пыракан кĕрешĕве вăйлатĕ, Хĕрлĕ Çар пулăшнипе хăйĕн тăван çĕршывне тата хăйĕн геройла тĕп хулине Варшавăна нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларĕ. Ирĕке тухнă çĕр çинче вара сутăнчăксем валли вырăн пулмĕ.

Я. ВИКТОРОВ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ октябрĕн 6-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Антверпен хулинчен çурçĕртерехре Путте çывăхĕнче союзниксен çарĕсем Голланди чикки урлă каçса кайнă. Союзниксен çарĕсем çаплах Баарле-Нассау хулипе Поппель хулинчен çурçĕрелле куçса пыраççĕ. Гильваренбеек патнелле каякан çул районĕнче пулса иртнĕ ăнăçлă çапăçусене пула, союзниксен çарĕсем Тильбург хули патнелле çывхарса пыраççĕ, хулана çитесси 3 миля кăна юлнă ĕнтĕ. Оверлоон хули районĕнче нимĕçсем опорнăй пунктсенче çирĕпленсе ларнă та хытă хирĕç тăраççĕ, союзниксен çарĕсене малалла кайма кансĕрлеççĕ.

Аахен хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Гербахран пĕр миля таран хĕвелтухăçнелле куçнă. Тăшман вĕсене хирĕç тăрса хытă çапăçнă. Убах хули çывăхĕнче тăшман артиллерийĕ çарсене тата танксене хытă пенĕ пулин те, союзниксен çарĕсем малалла кайнă. Союзниксен çарĕсем Беггендорф хули патне çитсе тухнă.

Нанси хулинчен çурçĕртерехре çаплах çапăçусем пыраççĕ.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Вильгельмсхафен хулине атакăланă.

Вăхăтлăх перемири условийĕсем тăрăх, Дюнкерк хулинчен 19.000 çынна урăх çĕре куçарса кайнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавращĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ октябрĕн 6-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Итали фрончĕн вăтаçĕрти секторĕнче 5-мĕш армири америкăнецсемпе акăлчансен чăçĕсем çаплах малалла куçса пынă. Америка çарĕсем Лойано хулине туртса илнĕ, тата тăшмантан Монцуно хулине ирĕке кăларнă. 8-мĕш армири Инди чăçĕсем Римини хулинчен хĕвеланăçнерехри сăртлă вырăнта малалла куçнă, Виньола ялне туртса илнĕ. Айлăмра патрульсем кăна кĕрешнĕ.

Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 200 вĕçев яхăн тунă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем октябрĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен паха чугун çул узелĕ пулса тăракан Саарбрюккен хулине тапăннă. Çавăн пекех тата Берлин çине те бомбăсем пăрахнă.

Рейтер агентствин тепĕр пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.000 бомбардировщик ытла Кельн хулипе Рейн хулинчи сортировка станцийĕсене тата Липпштадт, Гандорф тата Падерборн хулисенчи аэродромсене тапăннă.

Союзниксен çарĕсем Грецие аннă

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви хăйĕн союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавращĕнчи вăйĕсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернине парать. Унта союзниксен десант чăçĕсем Греции анни çинчен каланă. Ĕнер ирхине официальнăй йĕркепе пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

«Адриатикăра кĕрешекен десант çарĕсен чăçĕсем хальхи вăхăтра Грецин хăшпĕр утравĕсем çинче тата Греци материкĕ çинче те пур, вĕсем тăшмана тĕл пулнă та ĕнтĕ. Десант çарĕсен чăçĕсене шывпа пырса суднăсем çинчен те тата сывлăшпа пырса транспорт самолечĕсем çинчен те антарнă. Çавăн пекех тата парашютистсене те антарнă».

Союзниксен Балканри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ ĕнер пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: «Октябрĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле десант чăçĕсем Пелопоннесăн çурçĕр пайĕнчи Патрас (Патры) хулине кĕнĕ. Греци партизанĕсем союзниксен çарĕсемпе пĕрле кĕрешеççĕ. Грецие аннă чăссем хушшинче акăлчансен десант чăçĕсем тата акăлчансен авиаци полкĕн подразделенийĕсем пур. Акăлчансен «Спитфайер» йышши самолечĕсем Патрас районĕнче десант антариччен темиçе кун малтантарах кĕрешме тытăннă. Малтанхи вăхăтра тăшман пачах та хирĕç тăман, çавăнпа та сывлăш-çар вăйĕсен летчикĕсем самолетсем анса лармалли площадка тунă, пысăк подразделенисем антарма кирлĕ ĕçсене йĕркене кĕртнĕ. Кунти çапăçусем тăшман çĕрне çапăçса йышăннă чухнехи пек мар, оккупаци тунă чухнехи пек кăна пулса пынă».

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Балканри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвне панă. Унта çапла каланă: Пелопоннеса пынă союзниксен десант чăçĕсем, Патрас хулинчен хĕвеланăçнелле куçса, Рион хулине туртса илнĕ, халĕ вĕсем тăшманпа Коринф заливĕ патĕнче çапăçаççĕ. Тăшманăн темиçе судниине тыткăна илнĕ. Пелопоннес çурутравĕн тĕрлĕ пайĕсенче Раллис пуç пулса тăракан пуканелле «правительство» тунă охраннăй батальонсем парăннă. Албанире çанталăк начар тăнă пирки вăйлă çапăçма май килмен. Унта патрульсем тытăçа-тытăçа илнĕ тата тăшмана хирĕç артиллери персе тăнă. Союзниксен артиллерийĕ утравсем çинчен Далмаци çыранĕсене пенĕ.

Финсем çурçĕрте нимĕçсемпе çапăçаççĕ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Суомен сосиалидемокраатти» хаçат октябрĕн 4-мĕшĕнче «Пирĕн çурçĕрти вăрçă» ятлă хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Фин халăхĕн пысăк пайĕшĕн, тен пуриншĕн те, çурçĕрти вăрçă питех те тĕлĕнмелле ĕç пек курăнса кайма пултарать. Нимĕçсем Финляндирен хăйсен ирĕкĕпех тухса каясси çине пиртен нумайĕшĕсем ытлашши шанса тăнă. Анчах нимĕçсен командованийĕ Сталинград вăхăтĕнчен пуçланнă ухмахла политикăна Финляндире малалла тытса пыма шутланă пулас. Апла пулсан вара, Финляндин ирĕксĕрех çĕнĕ хаяр вăрçа, тен нумай вăхăтлăха тăсăлакан вăрçа хутшăнма лекет. Пирĕн хамăрăн вăйсене çурçĕртен килекен хăрушлăха хирĕç ямалла. Нимĕçсем юлашки вăхăтра Финляндире хăйсене мĕнле тыткалани вĕсен чăн-чăн ĕмĕчĕсене кăтартса пачĕ. Вĕсен ĕмĕчĕсем çавăн пекех тата суя радиопропагандăран та уççăнах курăнса тăраççĕ. Çав пропаганда тăрăх, фин халăхĕ икĕ пая уйăрăлса кайнă пулать, кăнтăрти Финляндире юнлă террор пуçланнă пулать, çурçĕрте вара «халăх правительстви» туса хунă пулать. Çакă ĕнтĕ вăл пирĕн «тус» мĕнлескер пулнине те кăтартса парать. Нацистла Германин системи малтан пуçласа вĕçне çитиччченех суяпа ултав çинче никĕсленсе тăрать».

НИМĔÇСЕМ БОЛГАРИЕ МĔНЛЕ ÇАРАТНА

СОФИЯ, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пропаганда министрĕ Казасов хăйĕн радио тăрăх тухса каланă сăмахĕнче çакăн çинчен астутарнă: нимĕçсем Болгари экономикине 4 çул хушши эксплоатациленĕ пурăнчĕç, вĕсем Болгари экономикин мĕнпур ресурсĕсене тăпăлтарчĕç. «Нимĕçсем, çав ресурссене тăпăлтарса илме тунă аппаратне пула, Болгари халăхĕнчен тĕрлĕ таварсем 47 миллиард левлăх туртса илчĕç, ун вырăнне Болгари халăхне нимĕн те памарĕç».

«КУРЬЕРУЛ» ХАÇАТ РУМЫНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ÇИНЧЕН

БУХАРЕСТ, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Курьерул» хаçат хăйĕн обозревателĕн статьине пичетлесе кăларнă. Статьяра çапла çырнă:

«Ĕнер пурте правительство вырăнтан тухасса шанатчĕç. Çак кунсенче паллă улшăнусем пулса иртесси пурне те курăнсах тăрать. Нациллĕ-демократиллĕ блока кĕрекен политикăллă партисем икĕ кун хушши пынă дискусси хыççăн правительствăран тухма йышăннă. Блокри партисен тăватă руководителĕ правительствăран тухман-ха, анчах та вĕсем чи çывăхри вăхăтрах тухаççĕ пуль. Нациллĕ-демократиллĕ пĕрлешĕве ертсе пыракансем çакна лайăх пĕлсе çитрĕç: власть йĕркине улăштарнă кунсенче ĕçе юрăхлă пулнă правительство хальхи вăхăтра, пĕтĕм государство аппаратне тата çĕршывăн пĕтĕм пурнăçне çĕнĕлле йĕркелесе ямалли кунсенче, ĕçе юрăхлă мар. Министрсен совечĕ кунсеренех ларусем туса ирттерет, çав ларусем 3—4-шар сехете пыраççĕ. Анчах та государство аппаратне тасатса пĕтерме мар, тасатма та тытăнман-ха. Ытти чи кирлĕ ĕçсем тĕлĕшпе те çавăн пекех хăтланаççĕ. Ку ĕçсене татса панинчен августăн 23-мĕшĕччен пулнă йĕркене çĕнĕлле, халăха юрăхлă туса ярасси килет.

Çакăн пек лару-тăру пулса тăни акă мĕнрен килет: правительствăри икĕ тĕп юхăм хушшинче тĕп ыйтусем тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе килĕшме пултарайман хирĕçÿсем пыраççĕ. Румыни халăхĕ айăплă çынсене пурне те наказани пама ыйтать. Антонеску вăхăтĕнче ĕçленĕ çынсене нумайĕшне хăйсен вырăнĕсенчех хăварнă çеç мар, вĕсене тата ытларах та аслăлатнă. Çавăн пирки халăх питĕ хытă тарăхать. Çавăнпа та ĕнтĕ Румынине тĕнĕл держависемпе çыхăну тытма пăрахтарса, фашизмран уйăрăлма пулăшнă политикăллă тăватă парти пурте çĕнĕ правительство тăвассишĕн кĕрешме йышăннă.

Анчах та çĕнĕ правительство тăвас пулсан, çав правительство тумалли ĕçсем пирки чи пĕчĕк программа та пулин йышăнас пулать. Коммунистсемпе социал-демократсем пĕтĕм государство аппаратне халех тасатма ыйтаççĕ. Çакна май акă мĕн çинчен астутарма тивĕçлĕ: юлашки 15 çул хушшинче Румынире государство бюджечĕ 240.000 служащие тытса тăма аран çитсе пынă. Хальхи вăхăтра государство 380.000 служащие тытса тăрать. Çак ытлашши çĕнĕ служащисене Антонеску диктатури вăхăтĕнче ĕçе илнĕ. Экономика тĕлĕшĕнчен пăхсан та, аппарата тĕпренех тасатма кирлĕ».

БОЛГАРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ДЕКЛАРАЦИЙĔ

СОФИЯ, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер каçхине халăха радио тăрăх Болгари премьер-министрĕн Кимон Георгиевăн декларацийне пĕлтернĕ:

Декларацире çапла каланă: «Правительство халăх ирĕкне — вăл пур преступниксене те айăплама ыйтнине—пурнăçа кĕртес тесе, закон кăларнă. Çав закон тăрăх, кам хăй ĕçĕпе Болгарие союзниксене хирĕç пыракан вăрçа кĕртсе яма пулăшнă е тата вăрçă тĕлĕшпе урăх преступленисем тунă, вĕсене пурне те суда параççĕ. Айăпа кĕнисенчен пĕри те тĕрĕс халăх сучĕнчен пăрăнса юлаймĕ».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

комсомолецсемпе çамрăксен кинофестивалĕ кунĕсенче
çакăн пек фильмсем кăтартать:
Октябрĕн 8-мĕшĕнче
«ПОДВОДНАЯ ЛОДКА Д—9»
Октябрĕн 9-мĕшĕпе 10-мĕшĕнче
«В О И М Я Р О Д И Н Ы»
Кашни сеанс умĕн лекци пулать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Чăваш АССР Ĕç резервĕсен управленийĕн Çĕмĕрлери 1-мĕш номерлĕ ремесло училищи (ăна 1-мĕш номер ФЗО шкулĕнчен тунă) ачасене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Ремесло училищинче икĕ çул вĕренмелле.

Училище слесарь-инструментальщиксене, оборудовани юсакан слесарьсене, столярсене, токарьсене, электромонтерсене вĕрентсе хатĕрлет.

Училищĕне 14—16 çула çитнĕ арçынсемпе хĕрсене, пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Училищĕне вĕренме кĕнĕ чухне çак документсем кирлĕ:

1. Паспорт е хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 2) миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство е справка, 3) сывлăх пирки панă справка, 4) директор ячĕпе çырнă заявлени.

Училищĕне вĕренме илнисене общежитие вырнаçтараççĕ, выртса тămалли вырăн параççĕ, кĕпе-йĕм, гумтир тата атă-пушмак параççĕ, кунне виçĕ хут апат çитереççĕ.

Училищĕре октябрĕн 15-мĕшĕнче вĕренме пуçлаççĕ.

Заявленисене çак адреспа çырмалла: гор. Шумерля, ул. Ленина, 1, Ремесленное училище № 1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00782. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.800 экз.